Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Яковлев Иван Яковлевич

## Книга: Утăра

## Рассказ: Кашкăрпа путек

Кашкăр пĕр путек çырма хĕрринче шыв ĕçнине курнă. Çак путеке ун пит тытса çиесси килсе каинă. Кăна ку ăçтан та пулин айăпласшăн кăшкăрса пăрахса калать:

– Эсĕ шыва пăтрататăн, мана ĕçме памастăн, – тет.

Путекки калать:

– Ах, кашкăр, эпĕ шыва епле пăтратам? Эпĕ санран анатарах тăратăп-çке, ĕçессе те тута вĕçĕпе анчах ĕçетĕп, – тет.

Кашкăрĕ калать:

– Эппин тата мĕншĕн эсĕ иртнĕ çура манăн аттене темĕн те пĕр каласа пĕтертĕн? – тет.

Путекки калать:

– Кашкăр, вара иртнĕ çура эпĕ çуралайман та-çке, – тет.

Кашкăр çапла шалт çилленсе çитнĕ те каланă:

– Сана тавлашса çĕнтереймĕн, эпĕ халĕ выçă, çавăнпа çиетĕп ĕнтĕ сана, – тенĕ.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.